





ԎӐВАШ КОМПОҪИТТӐРӖСЕМ
**Ҫ. М. Макҫимӑв, Ф. П. Павлӑв, В. П. Воропйов.**

# Ԏӑваш хорӗ Мускавпа Ԏулхулара.

Ԏӑваш йуррисемпе, мусӑкӗпе пирӗн Сойусӑн тӗп хулине — Мускава паллаштарма пӗлтӗрех шухӑш пурԏԏӗ. Хатӗрсем ҫитейменнипе ку шухӑша кӑҫала хӑвартӑмӑр. Кӑҫал, ҫак шухӑша пурнӑҫа кӗртес тесе, май уйӑхӗнԏе епӗ Мускавпа Ԏулхуларан ԏӗнӳсем илсе килтӗм. Пире Мускава Канӑҫупа Куԏттурӑ Паркӗ пӗр ерне йурлама, Ԏулхулари Профсовет — Канавӗнпа Сормӑвра икӗ контсерт тума ԏӗнԏӗҫ. Ҫутӗҫ Комиссариаԏӗ пулӑшнипе хор контсерта кайас шухӑш пурнӑҫа кӗме пултарԏӗ вара.

Контсерта кайас умӗн Шупашкарта йатарласа ийунӗн 9-мӗшӗнԏе 2-мӗш етнокрафи контсерԏӗ турӑмӑр та, 13-мӗшӗнԏе Мускава тухса кайрӑмӑр. Пиԏӗн труппӑра мӗн пурӗ 42 ҫын пулԏӗ: хорта 33 ҫын, 2 солист (пӗԏԏен йурлакансем — А. И. Токҫинӑпа, И. В. Ваҫҫилйӗв), 1 ҫын ройаԏ калакан (Каԏӑ Макҫимӑвӑ), 3 йалти мусӑкҫӑсем, хорӑн тиришорӗсем — Ф. П. Павлӑвпа В. П. Воропйов тата епӗ. Мускавра труппӑ пит аван опшԏешиттире — Советсен 1-мӗш ҫуртӗнԏе — вырнаҫрӗ.

Ийунӗн 16-мӗшӗнԏен пуҫласа 23-мӗшне ҫитиԏԏен хор 8 кун Паркра йурларӗ — шӑматкунпа вырсарни кунсенԏе Паркри пысӑк театтӑрта, ытти кунсенԏе — пӗԏӗк театтӑрта. Мӗн пурӗ Паркра хор 12 контсертра йурларӗ. Кунсӑр пуҫне хор тата 3 ҫӗрте йурларӗ: ратио тӑрӑх — 2 хут, Тӗп Аслӑ Театтӑрта тата Мустрестра кӑрмафон ваԏԏи 10 пласҭинккӑ йурласа ҫыртарԏӗ.

Ԏӑваш йуррисене Мускав пит хапӑл туса итлерӗ. Малтан, пирӗн йурӑсене илтиԏԏен, контсертсене йертсе пыракан мусӑкҫӑсем епӗр аван йурласса питех шанман пулмалла. Вӑл палӑркалаԏԏӗ. Йурласа кӑтартсан, итлекен халӑх пире хапӑл тусан — Мускаври мусӑкҫӑсем вара пирӗн ҫине урӑх куҫпа пӑхма пуҫларӗҫ, ԏӗлхисем те вӗсен улшӑнԏӗҫ; вӗсем пире хӑйсемпе тан ҫынсен шутне хуԏӗҫ, пирӗн йурӑсем илемне сисрӗҫ, вӗсене аван, ӑста йурланине курԏӗҫ. Паркра йурласан пирӗнпе Украйнӑ хорӗн тиришорӗсем, урӑх солистсем пирӗнпе паллашрӗҫ, пирӗн йурӑсене хорпа тата пӗԏԏен йурлама нотсем ыйтакансем нумай пулԏӗҫ.

Ԏӑваш хорӗ илемлӗ шурӑ кӗпесемпе тухса тӑрсанах, контсертри халӑх алӑ ҫупса илет. Йурлама ҫӑмӑл, ресонанс пит аван — илемлӗн йанрай ԏӑваш йурри контсертсенԏе. Пуринԏен ытла кӑмӑла кайакан йурӑсем ҫаксем пулԏӗҫ: Ф. Павлӑвӑн — „Туй", „Тӳттӗԏ", „Олту"; Ҫ. Макҫимӑвӑн — «Ака-суха йурри», «Ан авӑн шӗшкӗ», «Ҫӑпата», «Мулкаԏ йурри»; В. Воропйовӑн — «Килмен те курман», „Кай, кай, Ивана". А. В. Токҫинӑпа И. В. Ваҫҫилйӗв солӑ йурлаҫҫӗ. Йурӑсем хушшинԏе ташӑ ӑстисем — Овԏинникӑвӑ, Филиппӑвӑ, Йемелйанӑвӑ, Алексейӗв — ԏӑваш ташшисене ташласа илеҫҫӗ, мусӑкҫӑсем ташӑ кӗввисем, йурӑсем сӑрнайпа, купӑспа, кӗслепе пӗрле каласа параҫҫӗ. Йурлакан йурӑсене пурне те вырӑсла куҫарса, ӑнлантарса паратпӑр итлекен халӑха.

Мускавра Тӗп Аслӑ Театтӑрта йурлани пирӗншӗн пит пысӑк ԏыс пулԏӗ. Епӗр унта ԏаплӑ лару хыҫҫӑн пулнӑ контсертра йурларӑмӑр. Ку веԏԏӑра ПСКП-йӗн Хӗрарӑм пайӗ тата Ҫутӗҫ Комиссариаԏӗ аԏасене пӑхас поххот майӗпе тунӑ. Ларура Лунаԏԏарски й-ш токлат тӑврӗ. Контсертра пирӗн хор ԏи малтан йурларӗ. Йурласса 4 йурӑ йурларӑмӑр: «Пиҫнӗ пиҫмен ҫырлашӑн» — Тмитрийӗв карм., „Хӗр йӗррипе туй йурри" — Лопаԏԏов компоҫиттӑр (вӑл хӑйех ройаԏпе каларӗ контсертра), «Ака-суха йурри» — епӗ кармониленӗ, „Туй йурри" — Павлӑв кармониленӗ.

Контсертра аслӑ, ответлӑ ҫынсем пулԏӗҫ — Сталин, Лунаԏԏарски, Ҫвитерски йулташсем т. ыт. те. Тулли салӑ ҫын (2 000 ытла) пирӗн йурӑсене тӑнласа итлерӗ, йурлани вӗсен кӑмӑлне кайрӗ пулмалла. Пирӗн хыҫҫӑн Перҫимфанс (Сойусри ԏи ԏаплӑ оркестӑр) каларӗ, Аслӑ Театтӑрӑн ԏаплӑ арттисӗсем тухса йурларӗҫ. Ун пек контсертра йурлани, тепӗр хут калатӑп, ԏӑваш мусӑкӗшӗн пысӑк ԏыс пулԏӗ.

Кӑрмафон ваԏԏи хор 8 пласҭинккӑ йурласа паԏӗ, ҫак йурӑсене: 1. «Ҫӑпата», 2. «Туй йурри», 3. «Ҫӗнӗ улӑх йурри» тата „Кай, кай, Ивана", 4. „Ака-суха йурри", 5. „Шӑнкӑр кӑна" тата «Ан авӑн шӗшкӗ», 6. «Килмен

те курман» тата „Ташӑ йурри“, 7. „Пиҫнӗ пиҫмен ҫырлашӑн“, 8. «Мулкађ йурри». Токсинӑ «Кик-кик хуракӗш», Ваҫҫилйӗв пӗр пластинккӑ ҫине икӗ йурӑ — „Ҫӑлтӑр виттӗр“ тата „Кӑмиссарӑн ађисем“ йурласа пађӗҫ.

Ђӑваш йуррисене пластинккӑ ҫине ҫырма илиђђен вӗсене комиҫҫире пӑхса тухрӗҫ. Унта мусӑк йенђен пӑхакан експерт ђаплӑ композиттӑр, халӑх арттисӗ Ипполитӑв-Иванов пулђӗ. Вӑл пирӗн нотсене пӑхса тухрӗ, хӑшне йурласа та пӑхрӗ те: „аван йурӑсем, мусӑк йенђен тӗрӗс ҫырнӑ вӗсене, ҫырма йурађ, ҫырас пулађ“, тесе Фетӑр Павлӑђпа мана савӑнтарђӗ ку ђаплӑ композиттӑр. Ипполитӑв-Иванов калани ђӑваш мусӑкне ҫӗклет, пире те, ђӑваш композиттӑрӗсене, тӗрӗс ҫултан пӑрӑнса кайманнине кӑтартађ.

Ҫакӑн пекех тепӗр паллӑ мусӑкҫӑ, ратиора мусӑк ӗҫне йертсе пыракан Ҫ. Пукославски хор ҫинђен „Исвеҫти“ре ҫырнӑ отсӑвра ђӑваш композиттӑрӗсем хайсен кармониленипе халӑх йуррин илемне пӑсманни ҫинђен ҫырађ („Известия“ ЦИК СССР, 28—VI 1929 г. № 145). «Пӑсман» тени пирӗншӗн мухтанинђен те паха йапала: кармонилесен халӑх йурри пӑсӑлмасан, унӑн илемӗ ҫухалмасӑ пулсан — епӗр тӗрӗс ҫул ҫинђе, малалла ӗҫлеме те вара шанђӑк пур.

Аслӑ Театтӑрта 26-мӗшӗнђе йурласан тепӗр кунне Ђулхулана тухрӑмӑр. 28-мӗшӗнђе Канавӗнри Култтурӑ Ҫуртӗнђе йурларӑмӑр. Кунта та салӑ пит пысӑк — 1.700 ҫын кӗрет. Канавӗнри ӗҫлекенсем, Ђулхулари ответлӑ вырӑнта тӑракансем (епӗр вытвишентсене курсран кӑларнӑ пирки тунӑ ђаплӑ лару хыҫҫӑн йурларӑмӑр) пирӗн йурӑсене аван итлерӗҫ, хапӑл турӗҫ. Тепӗр кунне Сормӑвра 1-мӗш Май йатне панӑ пахђара 3 хут йурларӑмӑр. Малтан уҫӑ стсенӑ ҫинђе контсерт патӑмӑр — ҫанталӑк нађартарах пулсан та пире итлеме темӗн ђул халӑх пуҫтарӑнђӗ. Контсерта итлеме Сормӑвра ӗҫлекен ђӑвашсем, тутарҫем те пыђӗҫ — вӗсен вӑл кун пуху пулнӑ. Унтан кинора икӗ ҫеансра икӗ тулли салсын пире итлерӗ. Шутласан, пирӗн йурӑсене Канавӗнпа Сормӑвра 4.500 халах илтрӗ. Контсертсем умӗн Ђӑваш респуплӗкӗ Ђулхула оплӑҫне кӗмелли ҫинђен, ђӑваш халӑхӗ малашне хӑйӗн култтурӗне, хуҫалӑхне хӑпартма Ђулхула пролеттариађӗне пӗрле ӗҫлеме шанни ҫинђен каларӑмӑр, йурӑсене, Мускаври пекех, вырӑсла куҫарса ӑнлантарса патӑмӑр.

Канавӗнри контсертра манпа „Нижегородская Коммуна“ хаҫађӗн мусӑк ретсенҫеђӗ нумай калаҫрӗ. Вӑл пӗлекен мусӑкҫӑ — Ленинкратри Конҫерватторине пӗтернӗ ҫын. Ђӑваш йуррине вӑл пит йуратрӗ, пирӗн контсертшӗн хавас пулђӗ. Епӗр йурлани ҫинђен вӑл Ђулхулари хаҫатра ырласа икӗ номӗрте ҫырнӑ.

Йулашкинђен, прахутпа Ђулхуларан Шупашкара таврӑннӑ ђух прахут ҫинђе 7 амерӗк ҫыннисем вађђи контсерт турӑмӑр. Ђӑваш йурри вӗсен ђӗрисене те парӑнтарђӗ, йурланӑшӑн пит хавас пулђӗҫ. Контсерт хыҫҫӑн амерӗк ҫыннисем сӑмах каласа хора тав тӑврӗҫ, асӑнмаллӑх Амерӗк флакне парнелерӗҫ. Контсерта итлеме пур I-мӗшпе II-мӗш класри ҫынсем, прахут команти пуҫтарӑнђӗ, йурланӑ хыҫҫӑн вырӑссем те хӑшӗпӗри пырса тав тӑврӗҫ.

## МУСКАВА КАЙСА КИЛНӖ ЂӐВАШ ХОРӖ.



Хор йурласа çӳренĕ çĕрте пĕр пысăк çитменлĕх пулţĕ — ţăваш хорне Мускав тавраш̆ĕнţе ĕçлесе пурнакан ţăваш рапоţţисене кăтартаймарăмăр. Хăш-хăш хапрăк-савăт районĕсенţе (Мытишţăра, Пушкинăра) ţăвашсем нумай (пĕр тĕлте 500-ре йахăн). Вĕсем ţăваш пурнăçĕнţен татăлса нумайтанпа пурнаççĕ, ţăваш искусствине курмаççĕ-илтмеççĕ, вырăс искусстви ăнланма вĕсене йăвăртарах. Çавăнпа Мускав тавраш̆ĕнţи ţăвашсене ţăваш йуррисене итлеме май тупса памалла пулнăţţĕ. Епĕр хамăр йенţен ку ĕçе тăвас тесе нумай тăрăшрăмăр, анţах Мускавра ответлă çĕрте (Çутĕç Комиссариатĕнţе, „Ţăваш Хресţенĕ“-нţе) ĕçлекен ţăвашсем ку ĕç çине пӳрне виттĕр пăхнипе çĕнĕ йурăсене ţăваш рапоţţисене йурласа параймарăмăр. Ку хоршĕн пит кӳренмелле пулţĕ.

Çапла иртрĕ пирĕн контсертсемпе кайса çӳрени. Мухтавĕ пулţĕ хора, анţах ĕçлессе те нумай ĕçлемелле пулţĕ. Хăш-пĕр кун Мускавра кунне 3-4 хут йурлама тĕл килţĕ. Пуринţен ытла йăвăрри кăрмафон валţи йурланă çĕрте пулţĕ — кунта 3 кун 4-шар, 5-шер сехет иртермелле пулţĕ. Çапах хорта йурлакансем пĕртте ӳпкелемерĕç, ţăваш мусăкшĕн хавассăн тăрăшса ĕçлерĕç. Çавăншăн вĕсене пысăк тав.

Тиришорсем хăйсен ĕçне пĕлнипе хор йурлани техникĕ тĕлĕшĕнţен пит аван пулţĕ — апла пулман пулсан ţăваш йурри йут çын ţĕрине çул тупайман пулĕţţĕ. Пукославски хор çинţен: „Это — отличный профессиональный хор, не потерявший в то же время свежести народного бытового исполнения“, тесе çырaт. Республĕкĕн ţăваш хорĕ икĕ çул анţах ĕçлет, çапах та вăл нумайтанпа ĕçлекен паллă хорсемпе тан тăма пултарат. Çавăнпа ĕçе малашне тата аванлатма шанţăк пур.

Хор таврăннă вăхăтра Шупашкара Тĕпĕçтăвком ţленĕсем çеççийе килнĕ. Правиттĕлствă ыйтнипе ийулĕн 3-мĕшĕнţе Хресţен çуртĕнţе хор йурăсем йурласа патĕ, контсерт умĕн епĕ йепле çӳрени çинţен каласа патăм. Çеççи ţленĕсем те йурланине хапăл турĕç, хора республĕк хорĕ шутне тĕплĕрех çирĕплетмелле тесе йышанţĕç.

Ţăваш мусăкĕн çулĕ уçăлaт — контсертпа кайса килни çавна аван кăтартрĕ. Мускавра пире малашне те ţĕнмелли çинţен сăмахсем пулţĕç. Тепĕр çулсенţе контсертсемпе урăх республĕксене, пысăк хуласене кайма май пурри курăнат. Анţах унта çӳреţţен пирĕн Ţăваш республĕкĕ тăрăх çӳресе ӳссе ыракан ţăваш мусăкне ţăваш ĕçхалăхне итлеме памалла. Ку — пирĕн килес çулхи тĕп сатаţă.

**Ç. МАКÇИМĂВ.**

# ХИР САССИ.

**Н. Пиктемир.**

Хир, вăрман, хĕвелĕ, — çак илемлĕх
Йапатса пире çитĕнтерет.
Çаврăм йурă йурласа илмеллĕх
Ман çинţе пайан çĕнĕ ţерет.

Хирваскат: ырашĕ шăркараţţĕ,
Вĕçтереţţĕç шурă пĕлĕтсем.
Сисĕнмерĕ, васкасах саралţĕ,
Ţăмăртанţĕç тулăх пĕрţисем.

Йал тапранţĕ. Çурласем йурларĕç.
Вăхăта иртертĕм вырмара.
Ерчерен вырман ана йулмарĕ,
Çĕмелсем те ларţĕç сахал мар.

Ĕçĕ хыççăн савăк пушă вăхăт,
Каçсерен хĕр-каţţă урамра.
Ваттисемшĕн, паллă, ţапла ыйхă,
Епĕр пур пулатпăр вайăра.

Хĕвелпе кунсем ţупсах кумаççĕ,
Каç пулат... çитет те ир.
Пушă вăхăт çитесре курмасăр
Пухува пуçтарăнтăмăр епир.

Çамрăка — çынçуллă вашаватлăх
Кускалат хастарлă йурăра...
...Сăввисем йухаççĕ пит хăватлă,
Уçă сасă йанкăшса тăрат.

Ак, Пеţук — хисеплĕ комсомолĕç,
Ţаранса пуçларĕ сăмаха:
Çĕнĕ ĕç тапратнă райкомолĕ,
Вăл ан иртĕр пирĕнсĕр ахаль.
. . . . . . . . . . . . . .

Йал-хула пурнасшăн алă-алăн,
Савăтра — шаккаççĕ, хирте — акаç,
Ес ăнлан: хăватлă комсомолăн
«Колхос» вăл — пайанхи ахах.

Сăмахсем çĕкленţĕç, хавшакланţĕç,
Йĕркерен тухмарĕç айакка.
«Малтанхи ыраш кĕлти» ţапланţĕ —
Вайланмашкăн йал хисеп шаккат.

Тăшмансем, ыйтатпăр сирĕлмешкĕн!
Тек кăшлаймăр ирĕклĕ ӳте.
Пур ţухне те, кĕр, сире çĕнмешкĕн
Епĕр пехилетпĕр „пĕр кĕлте!“

Хир, вăрман, хĕвелĕ, — çак илемлĕх
Йапатса пире çитĕнтерет.
Çаврăм йурă йурласа илмеллĕх
Ман çинţеţţĕ, терĕм еп, ţерет.



Ана çинţе...